*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

50 (2563) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
июль / утă
17

ЭРНЕКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

**РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔНЧЕ**



Киров ячĕллĕ хуçалăх уй-хирĕнче.

Сăнÿкерчĕкĕ www.cap.ru сайтран илнĕ

# Хĕлĕпех – сĕтеклĕ апат

### Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче

Республикăри хуçлăхсенче утă, сенаж, силос, витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрлеççĕ. Мĕнпур техника, вăй-хал уй-хирте. Кăçал çанталăк типĕ тăни ĕçченсене курăка вăхăтра çулса типĕтме пулăшрĕ темелле. Лаптăксем куллен пушансах пыраççĕ. Июлĕн 14-мĕшĕ тĕлне нумай çул ÿсекен курăксене 92 166 гектар çулнă. Патăрьел, Йĕпреç, Комсомольски, Муркаш, Пăрачкав, Етĕрне, Елчĕк тăрăхĕсенче 6-9 пин гектар таранах йышăннă вăл. Пĕр çул ÿсекен курăксене те 5 679 гектар çулнă. Улатăр енче вара çак ĕçе вĕçленĕ. Куславкка, Пăрачкав, Вăрнар тăрăхĕсенче те ку ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Çак вăхăт тĕлне выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма 75 928 тонна утă хатĕрленĕ. Ку палăртнин 105,7 процентĕ пулать. Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпÿ, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсенче плана ирттерсе пурнăçланă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи хуçалăхсен те туртăнма вăхăт, кирлин 46 процентĕ чухлĕ кăна паха апата янтăланă.

Палăртнă вăхăт тĕлне сенаж 134 121 тонна (79 процент) хывнă. Элĕк, Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Шупашкар тăрăхĕсенче ку ĕç хăвăртрах пырать. Вĕсенче плана ирттерсе тултарнă. Силос 27 366 тонна пур. Сĕтеклĕ апата Элĕк, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш енче ытларах хывнă. Сăмахран, Муркаш районĕнчи хуçалăхра кăна вăл 10 пин тонна ытларах. Витаминлă курăк çăнăхĕ 294 тонна. Условлă выльăх пуçне 15,7 апат единици тивет.

Куславкка районĕнче 250 гектар пахчаçимĕç пуçтарса кĕртнĕ. Гектарти тухăç – 500 центнер.

Асăннă вăхăт тĕлне кĕрхи культурăсем акма 39 619 гектар çĕр хатĕрленĕ. Чи пысăк лаптăк – Улатăр енче, 4248 гектар.

### Пĕр çемьери пек

Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ производство кооператив ĕçченĕсем те уй-хиртен кĕме пĕлмеççĕ темелле. Пысăк хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх йышлă усраççĕ. Ĕне выльăх 1462 пуç, çав шутра сăвăнаканни – 525. Апатне кура – сĕчĕ тенĕ. Çулла та, хĕлле те выльăх умĕнчен ешĕл апат татăлма пĕлмест. Çавна май сăвăм та лайăх. Хальхи вăхăтра ĕне пуçне талăкра 19 килограмм сĕт сăваççĕ. Ултă уйăхра кашни ĕнен сăвăмĕ 2690 килогрампа танлашнă. Кăтарту пĕлтĕрхинчен 107 процент ÿснĕ.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма апат самай кирлĕ çав. Халĕ кунта нумай çул ÿсекен курăксене 550 гектар çулнă. Ешĕл курăкран утă – 482, сенаж 3400 тонна хатĕрленĕ.

– Уй-хирти выльăх апатне йăлтах пуçтарса кĕртĕпĕр. Паян сĕтрен ытларах укçа кĕрет. Сăвăм вара ĕнене мĕн çитерниннчен килет, – теççĕ ĕçченсем.

Кооператива çирĕм çул ытла ĕнтĕ Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Андреев ертсе пырать. Предприяти республикăри ăнăçлă аталанса пыракан хуçалăхсенчен пĕри, «Агро – 100» клуб членĕ. Усă куракан çĕр ку тăрăхра 2206 гектар. Пĕлтĕр пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене гектар пуçне 23,4 центнер пухса кĕртнĕ.

Çĕр ĕçченĕсем пурнăçпа тан пыма тăрăшаççĕ. Сĕт-çу фермисене, машинăпа трактор паркне çĕнетсех тăраççĕ. Хăватлă оборудованипе, техникăпа пуянлатаççĕ. Юлашки вăхăтра çĕнĕ ферма хута кайнă, техника паркне те пĕлтĕр кăна 2,204 млн тенкĕлĕх пуянлатнă. Хуçалăхра пĕр-пĕрне пулăшса пыма тăрăшаççĕ. Туслă çемьере ĕç те ăнса пырать. Лав мĕнле шăвасси вара хуçаран, вăл пĕлсе ертсе пынинчен нумай килет. Çакна та палăртмалла: çак кунсенче Николай Степанович 70 çул тултарать. Çапах вăл кулленех ĕçре, çĕр çыннисемпе юнашар. Эпир те ăна юбилей ячĕпе саламлатпăр.

**Лариса НИКИТИНА.**

## Документсене – регистрацилеме

Июлĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавне хутшăнакан Михаил Игнатьев хăйĕн кандидатурине регистрацилеме документсене ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн членĕсене панă. Михаил Васильевича яваплă çак вырăна йышăнма «Единая Россия» политика партийĕн чăваш регион уйрăмĕ сĕннĕ.

Республика Пуçлăхĕн должноçне йышăнма хатĕрленекенĕн хăйĕн кандидатурине ырлани пирки чи сахалли – 287, чи нумайийи 301 алă пуснине пухмалла. Михаил Игнатьев кандидатуришĕн 301 çын алă пуснă. Çак шутра 56-шĕ – муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен депутачĕсем.

Саккунпа килĕшÿллĕн Тĕп суйлав комиссийĕ кандидата регистрацилес ыйтăва документсене йышăннă кунран пуçласа 10 кун хушшинче татса парать.

## Шăрăха пула

Республикăра пĕр вăхăт шăрăх çанталăк тăнăран Патăрьел районĕнче – июнь вĕçĕнче, Шăмăршă районĕнче июль пуçламăшĕнче чрезвычайлă лару-тăру режимĕ çирĕплетнĕччĕ, ятарлă хушу кăларнăччĕ. Халĕ ăна пăрахăçланă.

Шăрăх кăнтăр районсенчи ялхуçалăх культурисене самай сиен кÿнĕ. Малтанласа палăртнă тăрăх – уяр çанталăк асăннă тăрăхри хуçалăхсен 15,2 пин гектар çинчи культурăсене шар кăтартнă. Шăмăршă районĕнче тĕш-тырăпа пахчаçимĕç 3,3 пин гектар сиенленнĕ, Патăрьел тăрăхĕнче – 11,9 пин гектар. Кăтартусене тĕплĕнрех çак уйăхра палăртĕç.

## Çĕрулмин уй кунĕ

Комсомольски районĕнче çĕрулмин уй кунĕ иртнĕ. Ăна «Çĕрулмине мухтав» агрофирма йĕркеленĕ. Кунта хăнасем Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕ, çав шутрах Тутарстанран, Оренбург, Чулхула, Пермь, Ульяновск, Свердловск облаçĕсенчен. Пĕтĕмĕшле 200-е яхăн çын пуçтараннă.

Çĕрулмине тухăçлă çитĕнтерес, тупăшлă вырнаçтарас тĕлĕшпе семинар иртнĕ. Унта çак пахчаçимĕçе çитĕнтерекен ăста специалистсем хутшăннă. Вĕсем уй-хире те çитсе курнă, çĕнĕ сортсене – «Гала», «Ред Скарлетт», «Инноватор», «Колетте», «Нандина» – çитĕнтерессипе паллашнă.

Семинарăн практика пайĕ Елчĕк районĕнче иртнĕ.

Форум вăхăтĕнче çĕрулмин çĕнĕ сорчĕсемпе, ăна апатлантармалли удобренисемпе паллашма май пулнă.

*Хисеплĕ вулакансем!*

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –**

**ЙŸНĔ ХАКПА!**

**«Хыпар» – 625,62 тенкĕ** *(кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йÿнĕрех)*

**«Хыпар»-эрнекун – 325,92 тенкĕ** *(19,62 тенкĕ йÿнĕрех)*

**«Хресчен сассине» 283,62 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

## Ялйыш савăнăçĕ

Çак кунсенче Етĕрне районĕнчи Кивĕ Тинкеш ял тăрăхĕнче çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлнă. Объекта хута яма, медицина хатĕр-хĕтĕрне туянма 2 млн ытла тенкĕ тăкакланă.

Çĕнĕ ФАП вицĕ ял çыннине тивĕçтерсе тăрĕ. Кивĕ медпунктра фельдшерăн çăм ату тăхăнса ĕçлеме тивнĕ пулсан, çĕнĕ çуртра – çутă, ăшă, хăтлă. Ахальтен мар ĕнтĕ çак пулăмшăн ял халăхĕ савăннă. «Ял аталантăр, чечеклентĕр, ачасем ытларах çуралччăр, – тенĕ Дина Орлова хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртса. – Эпир хуларан яла куçса килтĕмĕр. Халĕ выльăх-чĕрлĕх тытатпăр, ачасене пулăшатпăр. Çĕнĕ ФАП хута кайнишĕн çемйипех савăнтăмăр. Ăна пирĕншĕн, ял çыннишĕн, тунă-çке. Çакăншăн республика ертÿçисене тав тăватпăр».

Çитес вăхăтрах ку савăнăç Вăрнар районĕнчи Шăхаль ялне çитĕ. Кунта та çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлĕ. Вăл вицĕ ялти 595 çынна тивĕçтерĕ. Çавăн пекех асăннă районти Чăрăш Ишек тата Енĕш ялĕсенче те ФАП-сем хута кайĕç.

# Хăй ĕçĕнче пит маттур

**Выльăх-чĕрлĕх тухтăрĕ ялта яланах кирлĕ çын пек туйăнатчĕ мана. Патăрьел районĕнчи Вăрманхĕрринче пурăнакан Иван Иванов ветеринартан: "Тепĕр чух çĕр варринче те чĕнеççĕ пулĕ", – тесе ыйтрăм та хуравне илтсен кăшт аванмарлантăм. Интернет çинчен маннă иккен эпĕ. Выльăх çумне чир-чĕр çулăхсан мĕнпе сиплемеллине нумайăшĕ унта вуласа пĕлет. Ветеринартан пулăшу ыйтмаççĕ мар, паллах. Анчах ытларах – интернетри сĕнӳ-канаш чăнахах юрăхлине, ăна мĕнле пурнăçламаллине пĕлес шухăшпа. Çакă ветеринарăн ĕçĕ чакнине пĕлтермест. Вырăнти участокра (Нăрваш Шăхаль, Вăрманхĕрри Шăхаль ялĕсене тата Апрушнай поселока тивĕçтерет) пĕччен юлнă вăл, фельдшер та, санитар та, лаша пăхакан та çук. Конюх тата мĕн тума кирлĕ тетĕр-и? 2006 çулччен кирлĕ вырăна çитме районти ветеринари участокĕсенче лашасем усранă, çавăнпа вĕсене пăхакансем пулнă. Паян участокра пĕртен-пĕр заведующи тăрса юлнă. Унашкал тĕслĕх районта татах та пур-мĕн.**

Вырăнти тухтăртан выльăх йышлă усракансем çинчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Хăй те сахал мар пуç тытни хăлхана кĕнĕччĕ. "Çынсем йышлă усраççĕ", – терĕ вăл. Те шӳтлесе, те чăнласах калаnине малтанах ниепле те ăнкарса илеймерĕм. "Пурте-и? Çавах та ялта 4-5 ĕне тытакан çук терĕç-ха", – чĕрре кĕме хăтлантăм эпĕ. "Сĕт хакĕ çухалчĕ. Мĕншĕн йышлă усрамалла?" – тесен тин ăнлантăм шухăш-кăмăлне.

**– Иван Иванович, мĕншĕн апла калатăр? Çак уйăхран тытăнса ял çыннисене сутăнакан сĕт пахалăхне кура тӳлеме палăртнă республикăра. Таса сĕтшĕн укçине те ытларах илмелле.**

– Пахалăха тĕрĕсленĕ хыççăн йӳнелчĕ те сĕт хакĕ. 20 тенкĕрен тăруках 12 тенке анса ларчĕ. Пахалăхшăн кĕрешессине халăх малтанах ырласа йышăнчĕ, халĕ, ав, "макăрать".

**– Пуçтаракан сĕт пахалăхĕ япăххипе çыхăннă-ши çакă е усламçă хальлĕхе халăха пит хавхалантарма васкамасть?**

– Халăх сĕтне анализ валли эпир илетпĕр, ветстанцире ăна тĕрĕслеççĕ. Калăпăр, 100 çын сĕт парать пулсан çавăн чухлĕ пробирка хатĕрлетпĕр. Уйăхра пĕрре анализ тăваççĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн хăшĕ-пĕри 32 процент таран сĕте шывпа хутăштарни, антибиотикпа усă курни, хăймине уйăрса илни тата ытти те палăрнă. Мĕншĕн тесен сĕте 11 енпе пахалаççĕ. Усламçă тăкаклă ĕçлесшĕн мар. Халăха чăннипех хавхалантарас тесен унпа унăн килĕшсе татăлмалла. Тепĕр усламçă хака хăй шутланипе кăна палăртаймасть, сĕт тирпейлекен предприятирен те нумай килет.

**– Апла сĕт хакĕн ыйтăвĕ ял халăхне каласа парма, тавлаштарма пăрахмĕ. Тен, çавăнпа эсир килти хуçалăхра ытларах вăкăр усратăр. Капла туни тупăшлăрах мар-и?**

– Укçа мар, çурăм çинче курпун ĕçлесе илетĕн. 10 пуç вăкăр ӳстерме пайтах тырă кирлĕ. Унăн пĕр тонни кăна 10 пин тенке ларать. Выльăха апата пĕçермесĕр çитерместĕн, çавăнпа электричество çутин тăкакне те шута илмелле. Пĕтĕм тăкак виçи вăкăр хакĕнчен пайтах ирттерет. Выльăх хаклă сутăнмасть, чĕрĕ виçепе – пушшех те. Ку таранччен хамăр та пусса сутаканă, анчах халĕ пасара ĕлĕкхи пек ирĕклĕн пырса кĕреймĕн.

**– Выльăх усраса тупăшлă пулаймăн тесе каласшăн-и?**

– Унпа кăна пурнăç тытса пыма йывăр, çавăнпа юлашки çулсенче Мускава кайса ĕçлекелесе килме те тиврĕ.

**– Çак таранччен сирĕн патра сĕт хакĕ аван пулнă тенĕрен ĕне шучĕ ытла чакман пулĕ-ха.**

– Çамрăксем инçете ĕçлеме çӳренĕрен усрасах каймаççĕ, ытларах пенсионерсем тытаççĕ. Пирĕн Вăрманхĕрринче икĕ-виçĕ çул каялла 5 кĕтӳ çӳренĕ пулсан, халĕ виççĕ юлнă. 230 кил хуçалăхĕнче ĕне шучĕ 80 пуç е кăшт ытларах. Участока кĕрекен виçĕ ялпа 200 пуç ытла, çавăн чухлех – самăртмалли.

**– Ĕне, вăкăр усрама пайтах вăй-хал кирлĕ. Тен, ытти выльăх йышĕ ӳсет? Эпĕ çуралса ӳснĕ тăрăхра юлашки çулсенче сурăх нумайланчĕ.**

– Сурăх, качака усракан пирĕн патра та йышланчĕ. Пĕр вăхăт сурăха пĕтерме тăрăшнăран халĕ унăн какайĕ те чи хаклисенчен пĕри. Ялта, паллах, сурăх кĕтĕвĕ çук. Хăшĕ ăна килте усрать, тепри симĕс курăк çине илсе тухса кăкарать. Ĕне кĕтĕвĕпе пĕрле çӳретмеççĕ.

**– Мĕншĕн?**

– Сурăхран ĕнене "катаральная горячка" текен чир куçма пултарать. Сурăх хăй аптăрамасть, майракаллă шултра выльăх вара апат çиме пăрахать, суккăрланать, ăна çăлма питех те йывăр. Ĕлĕкех сурăхсене картара ĕнерен уйрăм тытнă. Ку чир çинчен эпир халăха ăнлантарсах тăратпăр.

Юлашки çулсенче кролик шучĕ ӳсрĕ. Çамрăксем, уйрăмах шкул ачисем, ку чĕрчунпа кăсăкланма тытăнчĕç.

Африка чуми чирĕнчен сыхланмалли пирки хытарса каласан килти хуçалăхра сысна йышĕ чакрĕ. Профилактика тĕлĕшĕнчен юлашки хут укол тунă чухнехи кăтартупа Нăрваш Шăхальпе Вăрманхĕрри Шăхальте 70-шер пуçа яхăн, Апрушнайра 6 пуç юлнă. Ăна çитерме тырă хаклă. Унăн хакĕпе ял çынни пĕр сысна ашĕ туянать, усраса нушаланмасть.

**– Выльăх усрасассăн та тăкакне чакарасси çинченех шухăшлать ял çынни.**

– Çапла пулмасăр. Ĕнене кĕркунне пăрулаттармалла пĕтĕлентерме тăрăшать. Çамрăк выльăх апата сахалрах çиет, капла аслăк çинчи утă перекетленет. Ял çынни ĕнене декабрь е ун хыççăн пĕтĕлентерсе октябрь-ноябрь уйăхĕсенче пăрулă пуласса кĕтсе пурăнать. Пирĕн тăрăхра ялхуçалăх предприятийĕнче питĕ ăста техник-осеменатор ĕçлет, халăх унăн пулăшăвĕпе усă курать.

**– Иван Иванович, эсир хăвăр та ветеринари тытăмĕнче чĕрĕк ĕмĕр тăрăшатăр. Халĕ ав участокра пĕччен юлнă. Мĕнпур ĕçе пурнăçлама ĕлкĕретĕр-и?**

– Ĕлкĕрме пулать. Выльăха сиплениcĕр, прививкăсем тунисĕр пуçне хальхи вăхăтра хут ĕçĕ нумай. Шута илнĕ чух кашни выльăха тĕплĕн çырса кăтартмалла, паспортне тумалла.

Ял халăхĕн пĕлӳлĕх шайĕ те ӳсет темелле. Выльăха пусса сутас тесен аш-какая тĕрĕслеттермелли çинчен малтанах пĕлтереççĕ. Ветеринари хучĕсĕр хăйсене кансĕр пулнине ăнланаççĕ. Вĕлле тытакан йышланчĕ. Пĕр вырăнта кăна, тĕслĕхрен, 7-8 утар вырнаçнă. Утарçăсем те пасара тухас умĕн пыл пахалăхне тĕрĕслеттереççĕ. Ку çеç-и? Ялти çынран чĕртавар туянас текен те ветучастока пырса унпа кăсăкланать, ăна-кăна ыйтса пĕлет. Ĕлĕкхипе танлаштарсан халĕ нумайăшĕ апат-çимĕç пахалăхне шута илет, сывлăхшăн усса кайтăр тет.

**Ирина НИКИТИНА.**

**– Çамрăк та хастар, – теççĕ Патăрьел районĕнчи Анат Туçари Леонид Кузнецов фермер пирки.**

**Çапла калама сăлтавĕ пур. Каччă Шупашкарта экономиста вĕренсе тухнă хыççăн тăван тăрăха таврăнса фермер хуçалăхĕ йĕркелесе янă. Усă куракан çĕр 60 гектар кăна темелле. Анчах пĕлсе ĕçлесен пĕчĕк лаптăкранах тупăш илме май пур. Тырă, пĕр тата нумай çул ӳсекен курăксем çитĕнтерет вăл. Тĕп тупăш çăлкуçĕ – севок сухан. Пурĕ 9 гектар йышăнать пахчаçимĕç. Унччен ятарлă техника пулманнипе ĕçе çынсене явăçтарма тивнĕ.**



# Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă



Леонид Кузнецов фермерпа Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов.

– Кунне кашнинех 500-600-шер тенкĕ тӳленĕ, вĕри апат çитернĕ. Кун пек пулăшу ытла та хакла ларать. Çавăнпа çине тăрсах ĕçе механизацилеме тăрăшрăмăр, – каласа панĕ Леонид Кузнецов.

Лаптăка гербицид сапнипе çумкурăк çитĕнеймест. Эпир çитнĕ тĕле уйра хăватлă техника умĕнче арçынсем хĕрсех тем сӳтсе яваççĕ.

– Ку агрегата Юрий Горшков ăстаçă пулăшнипе хута ятăмăр. Кăçал пĕрремĕш хут севока йăранпа лартрăмăр. Сухан аврине çулмалли агрегат та туса пĕтертĕмĕр. Халĕ кăларса пуçтармаллине тăвасшăн-ха. Унччен çак ĕçе те алă вĕççĕнех тунă. Палăртнине пурнăçласан сухан туса илессине йăлтах механизацилетпĕр. Апла аякран çынсене явăçтармасăр, хамăр вăйпах ĕлкĕрсе пырăпăр, – хавхаланса пĕлтерет фермер.

Паллах, уй-хирте техника хуçаланнă май сухан лаптăкне те ӳстересшĕн. Севок туса илесси уншăн çĕнĕлĕх мар. Патăрьел тăрăхĕнче ăна килсерен тенĕн çитĕнтереççĕ. Кузнецовсем те вунă çула яхăн унăн вăрлăхне туса илсе сутаççĕ. Аслисемпе пĕрлех ача-пăча та тăрăшать. Леонид вара хушма хуçалăхран фермера куçнă. 2013 çулта «Фермер ĕçне пуçăнакан» патшалăх программипе грант та илнĕ. Укçапа трактор, ялхуçалăх техники туяннă. Чăн та, тин çеç аталанса пыракан хуçалăхран пысăк тупăш илеймĕн. Çапах малтанхи утăмсем пур. Виçĕ çынран тăракан хуçалăх малаллах талпăнать.

«Мĕн акатăн – çавă шăтать», – тенĕ. Хуçалăх севок вăрлăхне ют çĕршывранах туяннă. Пахалăхне кура килограмĕ 1600 тенке кайса ларнă. 9 гектара вара 600 килограмм кирлĕ. Тăкак пĕчĕк хуçалăхшăн самай сисĕмлĕ. Анчах пысăк тухăç илес тесен тăкакланмаллах. Шăрăх вăхăтра лаптăка куллен шăварнă. Тăрăшни харама кайман.

– Севока ытларах аякра сутатпăр. Тавара вырнаçтарма Новосибирска та çитетпĕр. Унта хаклăрах каять, – терĕ çамрăк.

– Шăвармалли хатĕрсем туянни те паян кĕсьене пушатса хăварать. Тăкака саплаштарма патшалăх пулăшăвĕпе усă куратăр-и? – кăсăкланатăп унран.

– Шăвармалли хатĕрсене, уйрăмах шлангсене çĕнетсе тăмалла. Вĕсем вара йӳнĕ мар. Çавăнпа патшалăх пулăшăвĕсĕр йывăртарах. Тăкакăн 30 процентне яхăн саплаштарни пирĕншĕн пысăк пулăшу.

– Эсир çамрăк-ха, çемье çавăрма та ĕлкĕреймен. Тунсăх пуссан чун хулана, хаваслă та шавлă вырăна, туртмасть-и?

– Яла куçса килнишĕн пĕртте ӳкĕнместĕп. Аслă шкул пĕтерсенех хулара та ĕçлесе пăхрăм. Шалупа кăна пурăнма йывăр: те тумланмалла, те çимелĕх хăвармалла. Уйăхран уйăха укçа парасса кĕтсе пурăнмалла. Капла ĕçленине кура – тупăшĕ. Хама та ирĕклĕрех туятăп. Ялта халĕ çамрăксем сахал мар. Тунсăх пуссан машинăна ларатăп та Шупашкара е урăх хулана çул тытатăп. Тĕрĕссипе кичемленсе ларма вăхăт çук пирĕн: сухаламалла, акмалла, шăвармалла. Кайран вырма пуçланать. Хĕлле вара туса илнине сутмалла.

Хуçалăхăн тырă, пахчаçимĕç упрама 100 тонна вырнаçмалăх хранилище пур. Çитес çул, сывлăш çавăрса илнĕ май, тепре тăвасшăн. «Çĕнĕ хранилище валли 6-7 млн тенкĕ кирлĕ пулать. Патшалăх тăкакăн 20 процентне саплаштарнă чухне усă курса юлмаллах», – терĕ Леонид Валерьевич.

Фермерпа сывпуллашса çула тухрăмăр. Кĕçех вăл хăйĕн чаплă машинипе пирĕнтен иртсе кайрĕ. «Шупашкар та уншăн кӳрше каçнăпа пĕрех çав», – шутласа илтĕм ун хыççăн хура пĕлĕт пек çĕкленнĕ тусана сăнанă май.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕсем.**

Çĕр пирки – çĕр ыйту

# Нумай ачаллă çемьесене

Нумай ачаллă çемьесене патшалăх енчен пулăшса пыни – иккĕмĕш е ытларах ачашăн амăшĕн капиталĕ, çĕр пани – çĕршывра демографи лару-тăрăвне палăрмаллах лайăхлатрĕ.

2011 çулта республикăра «Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕрпе тивĕçтересси» саккун йышăнчĕç. Унпа килĕшÿллĕн виçĕ е ытларах ачаллă çемьесене дача, уйрăм çурт-йĕр тума, хушма хуçалăх аталантарма çĕр лаптăкĕ тÿлевсĕр харпăрлăха параççĕ. Мĕнле пурнăçланса пырать-ха вăл?

2015 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ тĕлне вырăнти хăйтытăмлăх органĕсенче çĕр тÿлевсĕр пама 6121 çемьене шута илнĕ. Нумай ачаллă кашни иккĕмĕш çемье ăна илме кăмăл тунă (ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх – çак вăхăт тĕлне республикăра нумай ачаллă 10559 çемье). 2011 çултанпа 3409-шĕн ыйтăвне тивĕçтернĕ ĕнтĕ (шута илнисен 56 проценчĕ). Çемьесем ăна уйрăм çурт-йĕр çавăрма (2151-ĕн), хушма хуçалăха аталантарма (1208-ăн), дача валли (50-ăн) илеççĕ. Вĕсене пурĕ 405,7 гектар уйăрса панă. Лаптăка харпăрлăха 2895 çемье регистрациленĕ (çĕр илнисен 85 проценчĕ). Çак вăхăт тĕлне нумай ачаллă çемьесене çĕр уйăрма 3848 çĕр лаптăкĕ йĕркеленĕ, пĕтĕмĕшле вăл 501,5 гектар йышăнать.

Улатăр, Канаш, Пăрачкав, Шăмăршă районĕсенче шута илнĕ мĕнпур çемье çĕрлĕ пулнă. Йĕпреç, Куславкка, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсенче те çак ыйтупа лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Канаш, Çĕрпÿ хулисенче ку енĕпе лару-тăру çивĕчрех. Çывăхра ирĕклĕ çĕр çуккипе аякра шырама тивет. Уйрăм çурт-йĕр çавăрма илекенсене уйрăмах тупса пама йывăртарах. Мĕншĕн тесен вĕсен лаптăкĕ те пысăкрах тата ăна пур çĕрте те уйăраймăн. Ĕçе хăвăртлатма Чăваш Ен Правительстви районсене те явăçтарать. Юлашки вăхăтра ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен категорине улăштарса çак тĕллевпе уйăрма тытăнчĕç.

Шупашкар, Канаш, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕсем Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Канаш районĕсемпе килĕшÿ тунă хыççăн йывăр лава вырăнтан хускатма май килнĕ. Районсем хула харпăрлăхне 66,5 гектар çĕр куçарнăран черетри 435 çемьене тивĕçтернĕ.

Ку ĕç малалла пырать. Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле хула администрацийĕсем муниципалитет харпăрлăхне 100 гектар çĕр пама килĕшÿ тунă.

Çемьесене уйăрмалли ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр Муркаш районĕнчи Катикасси ял тăрăхĕнче ытларах (100 гектар). Шупашкар хулин тата Муркаш район администрацийĕсем нумай ачаллă çемьесене çурт-йĕр çавăрма 600 участок йĕркелесе панă.

# Çĕнĕ урам çĕкленет

Красноармейски районĕнче юлашки вăхăтра пепкесем ытларах хушăнма тытăнни палăрать. Çемьесенче икшер-виçшер ача çуралать. Вĕсем амăшĕн капиталне, çĕр илеççĕ, пурăнмалли условисене лайăхлатаççĕ. Савăнăçлă лару-тăрура район пуçлăхĕ Андрей Шестаков тăватă çемьене çĕрĕн сертификатне панă. Кăçал вара ăна вунă çемье тивĕçнĕ. Çав шутран саккăрăшĕ – хушма хуçалăх аталантарма, иккĕшĕ уйрăм çурт-йĕр çавăрма илнĕ.

Хальхи вăхăтра Красноармейски район администрацийĕнче çĕр уйăрма 113 çемьене шута илнĕ, 97-шĕн ыйтăвне тивĕçтернĕ ĕнтĕ (86 процент). Район центрĕнче те тепĕр çĕнĕ урам çĕкленмелле. Унта паллах ытларах çамрăк çемьесем тымар ярĕç.



# Çурт-йĕр вырăнне – лавкка

Росреестрăн Чăваш Енри управленийĕ республикăра çĕр саккунне мĕнле пăхăнса пынине тĕрĕслесех тăрать. Çулталăк пуçланнăранпа саккуна пăснă 935 тĕслĕх тупса палăртнă. Йĕркене пăхăнманшăн 442 çынна административлă явап тыттарнă. Пĕтĕмĕшле штраф хисепĕ – 362 пин тенкĕ.

Кăçалхи мартăн 20-мĕшĕнчен штраф хисепĕ 10 хут ÿснĕ. Унччен чи пĕчĕкки 500 тенкĕ пулнă, халĕ – 5 пин тенкĕ. Çĕнĕ йĕркепе апрельте кăна 12 граждана административлă явап тыттарнă. Çĕрпе тĕллевлĕ усă курманшăн Шупашкар районĕнчи должноçри çынна 20 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Нумай пулмасть вара управленире тепĕр ĕç тĕпчеме пуçланă. Татьяна Кирова (ятне улăштарнă) çурт-йĕр çавăрма тесе çĕр илнĕ. Анчах пурăнмалли çурт çĕклес вырăнне лаптăкра юсав мастерскойĕ тата ялхуçалăх техникине упрамалли вырăн туса хунă. Ку – саккуна пăсни. Хĕрарăма çĕрпе тĕллевлĕ усă курманшăн, лаптăкпа хăй тĕллĕн хуçаланнăшăн административлă явап тыттарса 15 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Хуласенче пурăнакансем те патшалăх çĕрĕпе хăйсем тĕллĕн хуçаланма хăтланаççĕ. Пÿрт вырăнне мастерской, хăна е суту-илÿ çурчĕсем çĕклеççĕ. Теприсем тата территорине тирпейленĕ-илемлетнĕ пек туса обществăлла вырăна та хÿмепе картлаççĕ. Кайран унта сад е гараж тăваççĕ.

Управлени ертÿçин çумĕ Татьяна Васильева пĕлтернĕ тăрăх – хăшĕ-пĕри лаптăка йĕркене кĕртес вырăнне штраф тÿлесе хăтăлма тăрăшать. Чăн та, унччен пĕчĕк штраф вĕсемшĕн çăлăнăç та пулнă темелле. Анчах халĕ лару-тăру тĕпрен улшăнĕ. «Уйрăм çурт-йĕр валли çĕр уйăрсан ун вырăнĕнче хăна çурчĕ е лавкка пулмалла мар. Енчен пысăкрах лаптăк кирлĕ пулсан администрацирен тÿлесе илмелле. Хăйсем тĕллĕн йышăнма юрамасть. Штраф виçи ÿсни йĕрке тума пулăшĕ», – тенĕ вăл.

Предприяти-организаци йĕркене пăссан штраф виçи тата ÿсет: 100 пинрен пуçласа 200 пин тенкĕ таранах. Çĕрпе тĕллевсĕр усă курсан, сăмахран, пурăнмалли çурт вырăнне лавкка туса лартсан, граждансен 10 пинрен пуçласа 20 пин тенкĕ таран тÿлемелле. Должноçри çынсен – 20-50 пин.

Çурт е дача тума, пахча, сад валли илнĕ çĕре усă курмасăр юхăнтарса ярсан та явап тыттараççĕ: граждансене – 20-50 пин, должноçри çынсене – 50-100 пин, предприяти-организацие 400-700 пин тенкĕлĕх штрафлаççĕ.

Малашне айăпа кĕнисене йĕркесĕрлĕхе пĕтерме çырса панине пăхăнмасан та пуçран ачашласа шăлмĕç. Граждансене уншăн – 10-20 пин, должноçри çынсене – 30-50 пин, предприяти-организацие 100-200 пин тенкĕ таран штрафлама пултараççĕ. Çавăн пекех должноçри çынна виçĕ çула ĕçрен хăтарма ирĕк пур. Енчен иккĕмĕш хутĕнче те саккуна пăхăнмасан, çулталăк хушшинче йĕркесĕрлĕхе пĕтермесен, штрафсен виçи татах ÿсет: граждансен – 30-50 пин, должноçри çынсен – 70-100 пин (е ĕçрен виçĕ çула хăтарма пултараççĕ), предприяти-организацин 200-300 пин тенкĕ тÿлеме тивĕ.

Çавăнпа çĕр участокĕн документчĕсене кирлĕ пек йĕркелемелле. Документсăр лаптăкпа хуçаланакансен çак ĕçе вăраха ямалла мар. Сад, дача участокĕсене те манăçа кăларни хака ларĕ. Унти çĕре юхăнтарса ярсан, тĕллевсĕр усă курсан та штрафлаççĕ.

◆ ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

## Пĕр лаптăкра икĕ хуçа

**? Атте-анне пĕр лаптăкрах икĕ çемье валли çурт лартса пачĕç. Çуртăн пĕр хуçи хăйĕн пайне сутса ячĕ. Çĕнĕ хуçасем çурт кăна туянчĕç. Халĕ вĕсем çĕрне те хăйсем çине куçарттарасшăн. Лаптăка йăлтах хам çине куçарттарма пулать-ши?**

**Анна Михайловна.**
**Канаш районĕ.**

Çук, пултараймастăр. Çĕнĕ хуçасем куçман пурлăх туяннă май вăл ларакан çĕр правине те илнĕ шутланать.

## Тÿлевсĕр парĕç-ши?

**? Халĕ çĕр тÿлевсĕр илме пулать тенине илтрĕм. Мĕнле майпа-ши?**

**Михаил ИПАТЬЕВ.**
**Патăрьел районĕ.**

Чăн та, 2015 çулхи март уйăхĕнчен Çĕр кодексне кĕртнĕ улшăнусем вăя кĕнĕ. Малашне патшалăх çĕрне илме çăмăлланĕ. Унччен ăна вырăнти влаç ертÿçисенчен илме кăткăс пулнă. Чиновниксем сăлтавсăрах çĕр пама килĕшмен. Халĕ граждансем кирек мĕнле ирĕклĕ çĕре илме пултараççĕ. Анчах ăна тÿлевсĕр çак граждансене кăна параççĕ:

**1.** Халăх сахал пурăнакан районсене пурăнма тата ĕçлеме куçакан специалистсене (тухтăрсене, вĕрентекенсене, строительсене тата ытти те). Анчах участок тÿрех харпăрлăха куçмасть. Малтан ăна 5 çула тÿлевсĕр усă курма параççĕ. Çак вăхăтра пурăнмалли вырăна улăштармасан çĕре харпăрлăха куçарма юрать.

**2.** Фермер хуçалăхĕ йĕркелеме. Ăна та тÿрех харпăрлăха илеймеççĕ. Ĕçлесе кайсан, пилĕк çултан харпăрлăха куçарма пултараççĕ. Чăн та, халĕ чылай районта усă курман çĕр ахалех выртнипе ăна харпăрлăха маларах та куçарма май пур.

**3.** Нумай ачаллă çемьесене. Вĕсене ку енĕпе çăмăлрах темелле. Уйăрнă çĕре тÿрех харпăрлăха куçарма пулать.

Ытти çынсен вара çĕре кадастр хакĕпе (вăл рынокри хака çывăхрах) туянма тивĕ. Çитменнине аукцион урлă.

**Кăларăма Лариса НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

САККУН

# Вĕренĕн те вĕçĕ пур

Шупашкар районĕнче чиновник тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. 2008 çулхи июньте тата 2010 çулхи октябрьте Иванов (хушаматне улăштарнă) Кăшавăш ял тăрăхне ертсе пынă май ĕç вырăнĕпе усă курса суя документсем хатĕрленĕ те пĕлĕшне Кăшавăш ялĕнче 2 çĕр лаптăкĕ (пурĕ 0,3 гектар) уйăрса панă. Кайран хуçи вĕсене харпăрлăха куçарнă. Рынокра унăн хакĕ 640 пин тенкĕ пулнă. Пуçлăх юлташне вара тÿлевсĕрех парнеленĕ, бюджета пысăк тăкак кăтартнă. Паллах, лешĕ ăна савăнсах тав тунă: 2014 çулхи апрельте ĕç пÿлĕмĕнче 20 пин тенкĕ взятка панă.

Хура ĕç çиеле тухайманни чиновника савăнтарнă. 2013 çулхи июньте, Мăн Катраç ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕнче ĕçленĕ май каллех хайхи пĕлĕшне пулăшма пикеннĕ. Хальхинче унăн харпăрлăхне тÿлевсĕрех 0,28 гектар куçнă. Рынокри хак вара 1 млн та 400 пин тенке кармашнă. Пурлăха каялла туртса илесрен хăраса вăл хăвăртрах сутса янă. Ĕç ăнсан пулăшаканне тав тунă. Кăçалхи мартра ырă кăмăллă çынна 50 пин тенкĕ взятка тыттарнă хайхискер. Анчах кĕçех пуçлăх капкăна çакланнă.

Чиновник саккуна пăсни Шупашкар район администрацине 2 млн тенкĕлĕх тăкак кăтартнă. Ĕçе тĕпченĕ май çакă та çиеле тухнă. Иванов тепĕр юлташĕ умĕнчи парăмĕшĕн, 100 пин тенкĕшĕн, каллех çĕрпе татăлма хăтланнă. Лешĕн Васликасси ялĕ çывăхĕнче 0,1 гектар çĕр пуррине çирĕплетсе суя документсем хатĕрленĕ. Вĕрене тепле явсан та вĕçĕ пур тенĕ. Хальхинче ĕçе вĕçне çитересси пулман, çакланнă.



**ЫЙТУ – ХУРАВ**

## Шӗкӗрен мӗнле хӑтӑлмалла?

**? Хисеплӗ «Хресчен сасси»! Сирӗнтен пулӑшу ыйтса ҫыратӑп. Пӳрт пӗренисене шӗкӗ ернӗ, кӑшлать кӑна. Унран мӗнле хӑпмалла?**

**Алина ПЕТРОВА. Ҫӗмӗрле районӗ, Ҫӗмӗрле ялӗ.**

Шӗкӗ йывӑҫ ҫурт-йӗре пушар пекех пысӑк сиен кӳрет. Ҫавӑнпа ӑна упрама мӗнпур мелпе усӑ курмалла: йывӑҫа типӗтмелле, антисептикпа, антипренпа сӑтӑрмалла.

Йывӑҫ ҫурт-йӗрте шӗкӗне асӑрхама йывӑр мар: ун хыҫҫӑн шурӑ янкар юлать. Сиенленӗ вырӑна асӑрхасанах касса илмелле те ҫунтармалла.

Шӗкӗпе кӗрешме тытӑниччен ҫурт-йӗре мӗнле сӑтӑр кӳме ӗлкӗрнине пӗлмелле. Шӗвӗр ҫӗҫӗпе е отверткӑпа сиенленӗ вырӑна чикмелле. Йывӑҫ ӑшне тарӑн кӗмесен хими препарачӗпе ҫиелтен тасатни те пулӑшать. Шӑтӑк тарӑн пулсан – ҫак вырӑна касса илсе ҫунтармалла.

Хими хутӑшӗпе усӑ курнӑ май пӗренене тусанран тасатмалла, электропӑралука полиэтилен пленкӑпа хӳтӗлемелле, ӑшӑтакан материалсене ҫуртран илсе тухмалла. Ятарлӑ куҫлӑх, респиратор тӑхӑнса ӗҫе тытӑнмалла:

1. Олифа вӗрилентермелле, йывӑҫа ҫиелтен сӗрмелле. Енчен олиф вырӑнне краҫҫын, йӗтӗн ҫӑвӗпе е усӑ курнӑ машина ҫӑвӗпе сӗрсен йывӑҫ татах илемлӗрех курӑнма тытӑнӗ.
2. Шӗкӗне скипидар-краҫҫын хутӑшӗпе (3:1) пӗтереҫҫӗ. Ӑна шӗкӗ кӑшланӑ шӑтӑка тултармалла. Ҫиелтен парафин ирӗлтерсе хупламалла. Юнашар пӗренене те вазелинпа сӗрмелле.
3. Пӗренене тусанран, сӳсрен хытӑ щеткӑпа лайӑх тасатмалла. Унтан йывӑҫа вӗри олифпа сӗрмелле: вӑл шӗкӗ ҫинӗ кашни шӑтӑк-ҫурӑка лекме пултартӑр.
4. «Эмпайр-20», «Анижук», «Антишашелин» препаратсем те шӗкӗрен аван сыхлаҫҫӗ. Вӗсене пӗр пек сийпе пӗренесене сӗрмелле: препарат кашни шӑтӑка лексе шӗкӗпе хуртне пӗтертӗр. Анчах препарата ҫӳхе сийпе сӗрмелле, вӑл пӗренерен тумласа юхса тӑмалла мар.

Сиенлӗ хурт-кӑпшанкӑ кил-ҫурта тапӑнсан ҫийӗнчех унпа кӗрешме тытӑнмалла. Шӗкӗ йывӑҫ ҫурт-йӗре 5 ҫултанах юрӑхсӑра кӑларать. Вӑл кӑшланӑ ҫурта е хуралтӑна пӑсмалли ҫеҫ юлать.

**ХӲТЛӖХ**

## Вӑхӑтра пӗлтермелле

Сусӑрсене е тӑрантаракана ҫухатнипе паракан пенсие илсе тӑракан шкул ачисемпе студентсен ҫуллахи вӑхӑтра ӗҫе вырнаҫнӑ май Пенси фончӗн вырӑнти управленине ҫийӗнчех пӗлтермелле. Ҫавна май Пенси фончӗн ӗҫченӗсем социаллӑ тӳлеве вӑхӑтлӑха чарса лартӗҫ, ытлашши тӳлеве каялла шыраса илмӗҫ. Ӗҫе вӗҫлесен соцтӳлеве ҫӗнӗрен илсе тӑмашкӑн Пенси фончӗн ӗҫченӗсене тепӗр хут пӗлтермелле.

Паянхи кун Чӑваш Енре вӑхӑтлӑх ӗҫе вырнаҫнӑ май 1,3 пин ҫыннӑн соцтӳлевне чарса лартнӑ. Ытларах тӑрантаракана ҫухатнипе тивӗҫекен пенсие илекенсене. Ӗҫленӗ вӑхӑтра соцтӳлев илсе тӑнисен Пенси фондне ӑна каялла тавӑрса пама тивнӗ.

Саккун тӑрӑх – ӗҫлемен пенсионерсене тупӑш шайӗ регионра пурӑнма кирлӗ чи пӗчӗк виҫерен (2015 ҫулта вӑл 5771 тенкӗпе танлашать) сахал пулсан федерацин соцтӳлевне хушса параҫҫӗ. Чӑваш Енре унӑн виҫи – 1278 тенкӗ.

**ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ**

## Сыснан – чирлеттерет

**? Ҫын чирлекен грипп чирӗ выльӑха куҫма пултарать-и?**

**Анастасия КУПРИЯНОВА. Улатӑр районӗ.**

Ку ыйтӑва юлашки вӑхӑтра час-часах илтме тивет. Паллах, пур чӗрчун та гриппа чирлет. Анчах та вӑл вӗсене ҫынран ернине тупса палӑртман. Сысна пирки ҫакна каламалла: унӑн грипп вирусӗ этеме чирлеттерме пултарни паллӑ. Ҫыннӑн грипп вирусӗ те сыснана ерме пултарать-мӗн.

## Сӗт ӗне ҫиллинче тытӑнса тӑмасть

**? Манӑн ӗнене кӳршӗсем ытарайманҫҫӗ. Ҫилли пысӑк, нумай сӗт антарать. Анчах пӑрулана хыҫҫӑн ҫиллинче вӑл тытӑнса тӑмасть. Ҫулла кӗтӳрен таврӑннӑ чухне унпа ҫӗре шӑварать, уйран тӑтӑшах тарса килет. Сӗт ан юхтӑр тесен мӗн тумалла-ши?**

**Анна АНТОНОВА. Тӑвай районӗ.**



Зоотехнире кунашкал пулӑма галакторея теҫҫӗ. Халӑхра кун пирки вӑйсӑр ҫилӗ теме хӑнӑхнӑ. Выльӑх ҫилли сарлака пайран (сӗт цистернинчен) тата чӗчӗ пайӗнчен тӑрать. Юлашки пай чӗчӗ каналӗпе вӗҫленет. Вӑл ҫавра мускулпа хупланнӑ. Ҫав мускул тонусӗ ӳснӗ чухне чӗчче сума йывӑр, вӑл чаксан галакторея пуҫланать. Мускул вӑйсӑрлӑхӗ ҫуралсанах е ун хыҫҫӑн чире пула та аталанма пултарать.

Мӗнле сиплемелле тетӗр-и? Пӑрулансанах ӗнене кунне виҫӗ хутчен ытла сумалла, сунӑ хыҫҫӑн кашни ҫиллине 10-15 минут массаж тумалла. Тепӗр чухне кисет ҫӗвви хуни пулӑшать. Сӗт ан юхтӑр тесен ҫемҫе резина ункӑпа усӑ курма пулать. Анчах та вӑл ӗне ҫиллине ытла ан хӗстертертӗр, унсӑрӑн ун таврашӗнчи тӗртӗмсем "вилеҫҫӗ".

## Чи пӗчӗк сурӑх тата качака

**? Усрама ансат пӗчӗк (карлик) йышши сурӑхсем пур-и? Хӑйӗн ҫӳллӗшӗнчен вӑл текех ан ӳстӗр. Тен, ҫавнашкал качака та пур.**

**Алексей МИРОЛЮБОВ. Ҫӗрпӳ хули.**

Карлик така – килти выльӑхран чи пӗчӗкки. Урӑхла ӑна уэссент теҫҫӗ. Ӳссе ҫитӗннӗ кун пек така виҫи 8 килограмран пуҫласа 20 килограма ҫитет. Ҫӳллӗшӗ – 40-50 см. Хура, сарӑ хӗрлӗ, шурӑ, сӑрӑ тӗслӗ пулать. Пичӗн аялти пайӗ шӗвӗр, тутипе сӑмсисӗр пуҫне йӑлтах ҫӑмпа витӗннӗ. Тути ҫӳхе, ҫав тери вылянчӑклӑ.

Камерун качаки чи пӗчӗкки шутланать. Ӑна пӑхма ҫӑмӑл, вӑл кирек мӗнле условие те хӑвӑрт хӑнӑхать. Ҫӳллӗшӗ – 41-58 см, йывӑрӑшӗ – 23-39 килограмм. Кун пек качака мӗн пӗчӗкрен ҫӳллӗ сикме, йывӑҫ тӑрӑх хӑпарма юратать, ҫавӑнпа ӑна шӳтлесе африканецсен йывӑҫ качаки теҫҫӗ.

## Сивве чӑтӑмсӑр

**? Индокӑвакала ахаль кӑвакал пекех пӑхмалла-и? Вӗсене пӗрле тытма юрать-и? Пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ?**

**Надежда СМИРНОВА. Пӑрачкав районӗ.**

Уйрӑмлӑх ҫукпа пӗрех. Сивве чӑтас тӗлӗшпе кӑна расна. Кӑвакал юр ҫинче те пурӑнма (талӑкӗпе пулмасан та) пултарать, сивве тӳсӗмлӗ. Ҫывӑхра шыв пулсан унта кӗрсе тухать.

Индокӑвакал ӑшӑ вырӑнта ҫут тӗнчене килнӗ, ҫавӑнпа ӑна хӗлле типӗ сарай, ӗҫме шыв кирлӗ. Урамра 10 градусран ытла сивӗ тӑмасан уҫӑлтармашкӑн кӑларма юрать, анчах вӑрахлӑха мар. Кӗскен каласан, юр ҫине ларма тытӑнсанах индокӑвакала сарайне илсе кӗмелле.

Апата вӑл ахаль кӑвакал пекех тиркемест. Анчах унран сахалрах ҫиет. Шывра ишме кӑмӑллать, чӗпписене ахаль кӑвакалран 1-2 кун ытларах ларса кӑларать. Пӗчӗкскерсем 3-4 уйӑхра мар, 6-8 уйӑхран кӑна ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ.

## Чирлине пӗлтермест

**? Пирӗн питбуль йышши йытӑ пур. Эрне ытла типӗ сӑмсапа ҫӳрет. Ҫакӑншӑн пӑшӑрханатӑп.**

**Валентин ТРЕПОВ. Сӗнтӗрвӑрри хули.**

Йытӑ сӑмси типӗ пулни чирленине пӗлтермест. Сӑмса ҫывӑхӗнче вырнаҫнӑ куҫҫуль парӗсене пула йӗпе тӑрать вӑл. Сӑмса типни ҫав парсем йӗркеллӗ ӗҫлеменнипе ҫыхӑнман. Анчах та сире ҫак пулӑм питӗ кулянтарсан ветеринар патне ҫул тытма сӗнетпӗр.

**ПАХЧИ-ПАХЧИ**



## Пӑрлӑ ҫумӑр сиенлетсен

Кӑҫал пӑрлӑ ҫумӑр пахчана палӑрмаллах сиенлетрӗ. Ҫапах хуҫӑлса ӳкме кирлӗ мар, ӳсен-тӑрана ҫийӗнчех «сиплеме» тытӑнмалла. Ӑна йӗри-тавра кӑпкалатмалла – аманнӑскерне сывлама ҫӑмӑлрах пултӑр. Помидорпа хӑяра компост хывмалла, ятарлӑ шӗвекпе (1 апат кашӑкӗ мочевина, 10 л шыв) шӑвармалла. Ӳсен-тӑрана ӳсме пулӑшакан препаратпа сирпӗтмелле. Кайран, талӑкран, пылпа шыв хутӑштарса сапмалла. Пылак шӗвеке кашни эрнерех, июльтен пуҫласа сентябрьчченех сапсан пыл хурчӗсем йӑран ҫинчен таталма пӗлмӗҫ. Вӑл вара ӳсен-тӑрана шӑркалантарма кирлӗ. Мӗнпур пахчаҫимӗҫе кулленех ирхине ятарлӑ шӗвекпе сирпӗтмелле (1 литр шыва 15 тумлам йода хушмалла). Пӑрлӑ ҫумӑр хыҫҫӑн 2-3 эрнерен пахчаҫимӗҫ ҫӗнӗрен вӑй илӗ.

Ҫӗрулми аврине инсектицид шӗвекӗпе сиплемелле (5 литр шыва 1 г). Пӑрлӑ ҫумӑр хыҫҫӑн эрнерен мӗнпур культурӑна микроэлемент шӗвекӗпе сирпӗтмелле: бор, марганец, пӑрӑх купоросӗ, медицинӑра усӑ куракан зеленка.

## Ҫӗр ҫырли валли удобрени

Шултра ҫӗр ҫырлине удобренисӗрех ҫитӗнтерме пулать. Юлнӑ ҫӑкӑр касӑкӗсене типӗтмелле те ҫырлана апатлантарма усӑ курмалла. 200 г типӗтнӗ ҫӑкӑра (шурри е хури – пӗлтерӗшлӗ мар)1 л шыва ямалла. Хупласа 10 кун ӑшӑ вырӑнта тытмалла. Сӑрхӑнтармалла, ҫӑкӑр шӗвекне шывпа хутӑштармалла (1 л шӗвеке 10 л таса шыв). Унпа уйӑхра пӗр хут шӑвармалла. Ҫырла шултра та ӑнса пулӗ.

## Пӗрремӗш хунав лайӑххи-ши?

**? Ҫырлана хунама пӗрремӗш хунав лайӑх теҫҫӗ. Сас-хура тӑрӑх вӑл пысӑк тухӑҫ парать-мӗн. Тӗрӗссех-ши?**

Тӗрӗс тесе калама йывӑртарах. Мӗншӗн тесен пӗрремӗшӗ те, ытти хунав та пӗр сортран, пӗр тӗмрен. Ҫапах малтанхи ыттисемпе танлаштарсан лайӑхрах аталанать, тымар ярать. Унсӑр пуҫне ҫамрӑк хунавсем тӗп тӗмме вӑйсӑрлатса хӑвараҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрремӗш хунавне касса илсе ҫӗнӗ вырӑна лартмалла. Анчах ӑна ҫамрӑккисенчен тасатсах тӑмалла.

## Сухан ҫӗрет

**? Аван ҫитӗнекен суханах сасартӑк ҫӗрме тытӑнать. Пахчаҫимӗҫе мӗнле упрамалла чир-чӗртен?**



Ҫӑвӗпех тӑрӑшса вӑй хунӑ хыҫҫӑн лайӑх ҫитӗннӗ сухан ҫӗрсе сая кайни кӑмӑла хуҫать. Чир-чӗре хирӗҫ кӗрешме ҫак препартсемпе усӑ курмалла: «Квадрис», «Ридомол Голд МЦ», «Ридомил», «Фитал». Вӗсем шурӑ янкартан, ытти чир-чӗртен сыхлама пулӑшаҫҫӗ.

## Помидор мӗншӗн ҫуркаланать?

Теплицӑра е уҫӑ йӑран ҫинче помидор ҫуркаланнин сӑлтавӗ тӗрлӗрен:

1 **Типӗ ҫӗр.** Йӑран ҫинчи тӑпра нӳрӗклӗхӗ сасартӑк улшӑнни ҫимӗҫе сиен кӳрет. Типӗ ҫӗре тӳрех ытлашши шӑварни те сӑтӑр тӑвать. Ҫавӑнпа ӳсен-тӑрана куллен шӑвармалла, йӑрана типме памалла мар. Енчен тӑпра хытӑ типсен ӳсен-тӑрана тымарӗ патӗнчен ерипен шӑвармалла. Ун хыҫҫӑн кӑпкалатмалла, курӑкпа ҫиелтен витмелле.

2 **Сывлӑша уҫӑлтарманни.** Теплицӑра ҫитӗнекен пахчаҫимӗҫе те уҫӑ сывлӑш кирлӗ. Ҫавӑнпа ӑна час-часах уҫӑлтармалла.

3 **Ҫанталӑк улшӑнни.** Шӑрӑх хыҫҫӑн ҫанталӑк ҫумӑра кайсан тӑпрари нӳрӗклӗх палӑрмаллах ӳсет. Томат ытлашши шыва туртса илнипе ҫуркаланма тытӑнать.

*СӖНӲ: ҫуркаланман сортлӑ томат ҫитӗнтерме тӑрӑшӑр. Кун пирки вӑрлӑх чӗркемӗнче те палӑртаҫҫӗ.*

## СЫВЛĂХ

### Хĕрен пулăшать

Ура сыпписем ыратнăран хĕренпе сипленетĕп. Унăн çулçине тататăп та тин вĕренĕ шыва яратăп, 1-2 минут тытатăп, сыпă çине 2-3 сехете хуратăп, бинтпа чĕркетĕп. Çак процедурăна пĕр эрне хушши кашни кунах тăватăп.

Хĕрен çавăн пекех ыйхă вĕçнĕрен те пулăшать. Унăн тымарне теркăпа вĕтететĕп, ура хырăмĕ çине хуратăп. Ўте пĕçертме тытăнсан – илетĕп. Çак процедура хыççăн тутлă ыйхăпа çывăратăп.

**Анна СМИРНОВА. Патăрьел районĕ.**

### Юна шĕветме

Чавкапуç (красный клевер) юна шĕвететет: 1 стакан вĕрекен шыва 1 апат кашăкĕ чавкапуç чечекĕ ямалла, вăйсăр çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, çулăм çинчен илсен çур сехет тытмалла, сăрăхтармалла, пĕр стакан туличчен вĕрекен шыв хушмалла. Апат умĕн 30 минут маларах кунне виçĕ хутчен 1/3 стакан ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 21 кун. Пĕр эрне каннă хыççăн сиплев курсне малалла тăсмалла.


Чавкапуç

### Сиплĕ ĕçме

Холестерин шайне кирлĕ шайра тытма корицăпа пыл хутăшĕ пулăшать: 1 стакан вĕретнĕ шыва корица çăнăхĕ ямалла, сивĕтиччен тытмалла, 1 апат кашăкĕ пыл хушмалла. Кунне икĕ хутчен – ирхине тата каçхине – апат умĕн 30 минут маларах 0,5 стакан ĕçмелле. Напитока сивĕ вырăнта упрамалла. Сиплев курсĕ – 14 кун. Икĕ эрне каннă хыççăн ăна çĕнĕрен тăсмалла.

***Венăсем сарăлса тĕвĕленнине аптракансене Ванга сиплевçĕ пир-авăр чăлхапа ирхине сывлăм тăрăх утма сĕннĕ. Ăна кун каça та хывмалла мар. Тĕрĕслесе пăхăр, тен, пулăшĕ.***

### Эмелсĕрех

• Кунсерен пĕршер банан çиме тăрăшмалла. Унти усăллă япаласем чĕрепе юн тымарĕн тытăмне çирĕплетеççĕ, пуç мимине ватăласран упраççĕ.

• Хăяр вара пуç шавланине ирттерет. Ăна кун пек чухне кашни кун çимелле.

• Вар-хырăм лайăх ĕçлетĕр тесен эрнере икĕ хутчен тинĕс купăстин салачĕпе апатланмалла. Выç варла 1 стакан ахаль е минерал шывĕ ĕçни те пыршăсен ĕçне лайăхлатать. Ун хыççăн панулми çимелле. Кун пек чухне уçăлса çӳрени, зарядка туни те пулăшать.



### «Укçа йывăççĕ» имлет

Толстянкăна (урăхла ăна «укçа йывăççĕ» теççĕ) хăшпĕр çын укçаллă пулас тесе çитĕнтерет. Эпĕ вара – варикозран сипленме. 200 мл эрехе 15-20 вĕтетнĕ çулçă яратăп, тĕттĕм вырăнта 21 кун тытатăп, сăрăхтаратăп. Сиплĕ шĕвекпе каçхине, çывăрас умĕн, венăсем сарăлса тĕвĕленнĕ вырăнсене сăтăратăп. Чăн та, тĕвĕсем пĕчĕкленеççĕ, шăнăр туртни, ыратни иртет.

**Нина МАСЛОВА.**
**Тăвай районĕ.**

### Пылран хатĕрленĕ рецептсем

1 ШĂНСА ПĂСĂЛСАН:
1 стакан вĕри сĕте е чейе 1 апат кашăкĕ пыл (çăка е илепер пылĕ аван) ямалла, çывăрас умĕн мĕн сиплениччченех ĕçмелле;

1 лимон сĕткенне 100 г пылпа хутăштармалла, кунне икĕ хутчен – ирхине тата каçхине – 1-шер апат кашăкĕ ĕçмелле;

1 стакан вĕри шыва 100 г хăмла çырли е 2 апат кашăкĕ типĕтнĕ хăмла çырли ямалла, 15 минут тытмалла, 1 апат кашăкĕ пыл хушмалла, çывăрас умĕн ĕçмелле;

1 стакан вĕри шыва 1 апат кашăкĕ салтак тӳми чечекне ямалла, сивĕниччен тытмалла, сăрăхтармалла, 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла. Пыра, çăвара чӳхеме усă курмалла.

2 ГРИПРАН. 1 пуç ыхрана теркăпа вĕтетмелле, пылпа хутăштармалла (1:1 виçепе), çывăрас умĕн ăшă шывпа сыпса çимелле.

3 ЫЙХĂ ВĔÇСЕН, НЕРВ ТЫТĂМĔ ХАВШАСАН. 1 стакан вĕретсе сивĕтнĕ шывра 1 апат кашăкĕ пыл ирĕлтермелле, çывăрас умĕн ĕçмелле.

4 ЧĔРЕ ЧИРĔСЕНЧЕН. 50-100 г пыла çакăн чухлех ăшă шывра ирĕлтермелле, 1-2 уйăх кашни кунах ĕçмелле.

5 ГИПЕРТОНИРЕН. 1 стакан шĕвĕ пыла, 1 лимон сĕткенне, 1-шер апат кашăкĕ кăшманпа кишĕр сĕткенĕсене хутăштармалла, кунне 2-3 хутчен апат умĕн 1 сехет маларах 1-шер апат кашăкĕ ĕçмелле.

6 АТЕРОСКЛЕРОЗРАН. Сухан сĕткенне пылпа (1:1 виçепе) хутăштармалла, кунне 3 хут 1-шер апат кашăкĕ ĕçмелле.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ТĔПЕЛ

### Хăяр тăварлатпăр, маринадлатпăр

**ПĂРĂÇПА**

*3-3,5 л савăта кирлĕ пулать: 1 кг хăяр, 500 г пылак пăрăç, 1 шăл ыхра. Кашни банкăна хуратпăр: 1 хĕрен çулçи, 5 хурлăхан çулçи, 1-2 чей кашăкĕ кориандр, 10 хура пăрăç пĕрчи, 4-5 техĕмлĕ пăрăç пĕрчи. 2-3 гвоздика, укропăн 5 сунчăкĕ.*

*Маринад валли (1л): 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 апат кашăкĕ тăвар, 1-2 стакан уксус (9 процентли).*

1. Хăяра 4 сехетлĕхе сивĕ шывра шӳтермелле, пылак пăрăça 4-6 касăкпа турамалла. Ыхрана тасатмалла. Банкăсене ешĕл çимĕçпе, техĕмлĕхпе тултармалла.

2. Банкăна вĕретнĕ шыв тултарса 20 минут лартмалла. Ун хыççăн кастрюле шыв ярса маринад хатĕрлемелле: тăвар, сахăр, уксус хушса вĕреме кĕртмелле. Хăярлă банкăна маринад ярса 20 минут лартмалла. Унтан шĕвеке кастрюле сăрхăнтарса вĕретмелле, банкăна ярса хупмалла.

**ПОМИДОРПА**

*2-3 л савăта кирлĕ пулать: 1 кг хăяр, 1 кг помидор, 1 шăл ыхра. Кашни банкăна: 1 çупкăм укроп, 1 хĕрен çулçи, 5-6 кинза турачĕ, 1 лавр çулçи, 7 хура пăрăç, 3-4 техĕмлĕ пăрăç пĕрчи, 3 гвоздика. Маринад валли (1л): 3 апат кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ сахăр, 1-2 стакан уксус (9 процентли).*

1. Хăяра 3-4 сехетлĕхе сивĕ шывра шӳтермелле.

2. Банка çуррине техĕмлĕх, ешĕл çимĕç, çиелтен – хăярпа ыхра, ытти пайне помидор тултармалла. Вĕретнĕ шыв ярса хупăлчине хупмалла, 20 минут лартмалла. Ун хыççăн шыва кастрюле сăрхăнтармалла. Шĕвеке тăвар, сахăр, уксус хушса вĕреме кĕртмелле. Маринада туллиех ярса хупмалла. Тĕттĕм вырăнта упрамалла.



**Хисеплĕ редакци! Пурнăçăмра юлташ тупса çемье çавăрма пулăшсамăр мана. Эпĕ 57-ре. Хампа пĕр çулсенчи пĕччен хĕрарăмсем шăнкăравласса кĕтетĕп. Тел.: 8 961 346 39 14 Михаил.**

### Чăх çăмартине упрама

Çу кунĕсенче чăх çăмарти пухăнса каять. Ăна пăсăласран мĕн тумалла? Çăмартана лотока шĕвĕр пуçĕпе аялалла туса хумалла та сивĕ вырăнта упрамалла. Вăраха упрама çĕмĕрĕлмен, лайăх çăмартасене суйласа илмелле.

### Шăнтнă çырла

Пылак та сĕтеклĕ çимĕçе хĕл валли шăнтма пулать. Çак мелпе вăл çур çул ытла лайăх упранать. Çырлана çуса тасатмалла, типĕтмелле. Унтан поднос çине пĕр сий хумалла, шăнтмалла, пакета е ятарлă савăта тултармалла: капла çырла пĕр-пĕрин çумне çыпçăнмĕ.

### Кĕверен хăпма

Çăм япаласене кĕве тапăнасран çапла тумалла: кивĕ минтер питне е утиял çиттине тăвар ирĕлтернĕ вĕри шывра çумалла, типĕтмелле. Унпа çăм япаласене чĕркесе хумалла. Кĕве çывăха та пымĕ.

## ХЎТЛĔХ

### Опекуна укçа памаççĕ

**? Эпĕ пенсионер, анчах ĕçлетĕпха. Хĕрĕм вилнĕ хыççăн мăнука опекăна илтĕм (ашшĕн урăх çемье). Ачашăн тăрантаракана çухатнипе паракан пенсие тата алимент илсе тăтăм. Опека органне укçапа мĕнле усă курнине кăтартса отчет патăм. Пĕррехинче укçа илеймерĕм, опека органĕ ирĕк паман тесе ăнлантарчĕç банкра. Мĕншĕнне сăлтавламарĕç. Çакă тĕрĕсех-ши?**

**Галина ИВАНОВНА.**
**Етĕрне районĕ.**

Унччен тăлăха тивекен тӳлеве банкра ача ячĕпе уçнă счет çине куçарса пынă. 2014 çулхи иккĕмĕш çур çултан пуçласа саккуна улшăнусем кĕртнĕ. Халĕ ачана тивекен мĕнпур тупăш (алимент, пенси, пособи, ăна усрама каякан укçа) ятарлă, номиналлă счет çине куçать. Çак укçапа опекун опека органĕ ирĕк памасăрах усă курма пултарать. Анчах çулталăк вĕçленсен укçапа мĕнле усă курнине кăтартса отчет тумалла. Опека органĕ çак счетпа усă курассине чарма та пултарать (сăмахран, илекен укçа хисепне чакарма тата ытти те). Çавăнпа ку сăлтав пирки опека органĕнчен ыйтса пĕлме тăрăшăр.

### Шану хучĕпе

**? Ватă атте больницăра выртать. Уншăн шану хучĕпе пенси укçине илейетĕп-ши? Тĕп тухтăрăн шану хутне нотариус çирĕплетмесĕрех алă пусма ирĕк пур-ши?**

**Михаил ГРИГОРЬЕВ.**
**Йĕпреç районĕ.**

Аçăр сипленекен больницăн тĕп тухтăрĕ алă пуснă документ нотариус çирĕплетнипе танах.

Шалу, пенси, пособи, стипенди теприншĕн илсе тăрассине шаннă çын ĕçлекен, вĕренекен е вăл сипленекен сывату учрежденийĕн администрацийĕ те çирĕплетме пултарать. Шану хутне предприяти-организаци ячĕпе ертӳçĕ е саккунпа çакна тума ирĕк пур çын парать (РФ Граждан кодексĕн 185.1 статйи).

### Аннен пенсине илейĕп-ши?

**? Анне 8 çул каялла вилчĕ. Вăл 1955 çулта çуралнă. Унăн пухăнса пыракан пенси укçине илме пулать-ши? Çак ыйтупа ăçта каймалла?**

**Анна ИВАНОВА.**
**Çĕмĕрле районĕ.**

2002 çултанпа кашни ĕçлекен çыншăн предприяти Пенси фондне пенсин страхлав, хушăнса пыракан пайне йĕркелеме укçа куçарса пырать. Саккунпа пенсин страхлав пайĕн взносĕ пенсионерăн харпăрлăхĕ шутланмасть, вăл пенси палăртма кăна каять.

Этем пенсин пухăнса пыракан пайне палăртиччен вилсен ăна çывăх çыннисем илме пултараççĕ. 2002-2004-мĕш çулсенчен пухăнса пыракан взноса 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен (арçынсемшĕн) тата 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен (хĕрарăмсемшĕн) каярах çуралнисене куçарса панă. 2005 çулта саккуна улшăнусем кĕртнĕ хыççăн пухăнса пыракан взноса 1967 çулта е каярах çуралнă çынсемшĕн кăна упраса хăварнă.

Аннĕр хăçан çуралнине шута илсен унăн пухăнса пыракан взносĕ пулман.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Июлĕн, 17 – эрнекун | Июлĕн, 18 – шăматкун | Июлĕн, 19 – вырсарникун | Июлĕн, 20 – тунтикун | Июлĕн, 21 – ытларикун | Июлĕн, 22 – юнкун | Июлĕн, 23 – кĕçнерникун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.27 | 3.29 | 3.31 | 3.32 | 3.34 | 3.36 | 3.37 |
| | анать | 20.25 | 20.24 | 20.22 | 20.21 | 20.19 | 20.18 | 20.16 |
| Кун тăршшĕ | | 16.58 | 16.55 | 16.52 | 16.49 | 16.45 | 16.42 | 16.39 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче |

**Кăмăл турам пĕр турам**

# Вăрмар районĕн пултаруллă ывăлĕ

***Николай Прокопьевич Иванов-Пархатар тесен ăна Вăрмар районĕнче, Канашпа Тăвай таврашĕнчи чылай ялсенче пĕлмен çын çук. Аллă пилĕк çул вăл çынсен кусĕ умĕнчен каймасть: хăйĕн чăннипех пархатарлă, ырми-канми ĕçĕпе тулли савăнăç кӳрет, пĕлӳ парать, ăса кĕртет, çут тĕнче çине ăшшăн пăхма вĕрентет. Пĕр сăмахпа каласан, Вăрмар районĕн чĕрĕ те ĕмĕрлĕх палăкĕ вăл.***



Николай Пархатар – паллă педагог, ăста баянист, поэт тата композитор. Унра нумай енлĕ пултарулăх. Вăл – 200 ытла пĕчĕн тата хорпа, 40 ытла эстрадăпа, 60 ытла ачасем юрламалли çепĕç юрăсен, 3 вĕрсе каламалли оркестр тата баян ансамблĕ, трубапа оркестр валли кĕвĕленĕ "Серенадăпа" "Элеги" кĕнекесен авторĕ. Музыка композицийĕсем çырма Ф.М. Лукин, А.М. Михайлов, В.А. Ходяшев композиторсем пулăшнипе хăнăхнă. 1961 çултанпа М.Юхма, Р.Шевлепи, Р.Сарпи, А.Тимофеев-Ыхра, Ю.Сементер, Ю.Петров-Вирьял, А.Казанов, И.Топрисов, В.Эктель тата ытти авторсен, хăйĕн сăввисемпе тăван халăх кăмăлне килекен юрăсем çырчĕ.

Чăваш тĕнчинче уйрăмах хăй сăввипе кĕвĕленĕ "Тăван ен" юрри питĕ анлăн сарăлнăччĕ.

Ăна Маргарита Турингe юрланине ытарма май çукчĕ. Юрă республикăри радиоконкурс лауреачĕ ятне те тивĕçнĕччĕ.

Николай Ивановăн "Тăван ен", "Тух-ха урама, савни", "Хуркайăксем вĕçеççĕ кăнтăра", "Ма пит саврăм-ши?", "Юрату пĕрре кăна килет", "Купăс кĕвви янăрать" тата ытти нумай юррине итлекенсем уйрăмах хапăлласа йышăнчĕç, – палăртать Чăваш Республикин композиторĕсен ассоциацийĕн ертӳçи Николай Зимин музыковед. – Композитор-сăвăçăн çепĕç те илемлĕ юрри-кĕвви пурне те тыткăна илет. Вĕсене юрлама çăмăл, асра юлаççĕ, çавна май халăхра анлă сарăлнă. Художество пултарулăх коллективĕсем те вĕсемпе час-часах усă кураççĕ".

Акă тата: "Николай Ивановăн "Ман Вăрмарăм" (сăввипе кĕвви хăйĕн) юрă районăн хăйне евĕр гимнĕ пулса тăчĕ, – çырнă Аркадий Казанов "Хыпар" хаçатра. – Ăна Шупашкартан радиопа та часчасах параççĕ".

Коля Иванов Вăрмар районĕнчи Шăхальте хресчен çемйинче çуралнă. Вăрçă ачи. Мĕн ачаран кĕвĕ-çемĕ юратса ӳснĕ. Шăнкăрчсен юрри, тăрисен тăрлатăвĕ, шăпчăк чеклатни чун киленĕçĕ пулнă. Шухă ачан кĕвĕ ăнкарăвĕ те вăйлă аталаннă. Шăхальти вăтам шкулăн тăваттăмĕш класĕнче вĕреннĕ чух ашшĕ-амăшĕ ăна хуткупăс туянса панă. Саккăрмĕш класра Маруç аппăшĕ Мускавран çĕнĕ хромка илсе килнĕ те ăна парнеленĕ. Эх, туртнă купăса, алăран яман. Çĕнĕ юрăсем вĕреннĕ. Часах вăл шкулти тата ялти пултарулăх ушкăнне ертсе пыма пуçланă. Уяв концерчĕсем лартнă, шкулта фестиваль-смотрсем ирттернĕ, кӳршĕ ялсене концертсемпе çӳренĕ. Вăйăçăсăр тăван ялта пĕр уяв та, туй та, акатуй та иртмен.

1956 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухсан Николай Иванов Чăваш педагогика институчĕн историпе филологи факультетне кĕрет. Лайăх вĕренет. А. Галкин ертсе пыракан институт хорĕнче юрлать. Ю. Мясниковпа В. Алексеев педагогсен баян класне çӳрет. Пединститутра аслă пĕлӳ илнĕ хушăра Шупашкарти музыка училищинче Р. Жуковский патĕнче баян класĕнче куçăн мар майпа вĕренет. Çавăн пекех вăл кунта Г. Лисков, А. Петров, Г. Маркиянов патĕнче те ăсталăхне ӳстерет.

1960 çулта Н. Иванов Патăрьел районĕнчи Анат Тăрмăш шкулĕнче вырăс тата чăваш чĕлхипе литература вĕрентет. Тепĕр çулхине вăл Вăрмар районĕнчи Кавалти вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литература учителĕнче ĕçлет. Кунтан ăна ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарьне суйлаççĕ. Николай Прокопьевич райкомра ĕçленĕ çулсенче мана районти "Комсомол прожекторĕн" штабне йышăнчĕç. Унпа комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Куславкка чăвашĕ Николай Титов паллаштарнăччĕ. "Сăвăç, баянист, – терĕ вăл. – Штанга çĕклессипе республика чемпионĕ, классикăлла кĕрешессипе СССР спорт мастерĕн кандидачĕ... Тĕслĕх ил".

Тĕлĕнтермĕш. Çирĕм тăваттăри каччă институт пĕтернĕ, шкулсенче ĕçленĕ, спортра çитĕнӳсем тăвать, сăвăç тата купăсçă, юрăсем çырать. "Çĕнĕ çĕрсем уçнăшăн" медаль илме тивĕçнĕ...

Çук, пĕр çĕрте те тĕпленсе ĕçлеме шутламасть вăл. 1964 çулта И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институтĕнче музыкăпа педагогика факультечĕ уçăлать. Николай Иванов унта вĕренме кĕрет. Иккĕмĕш аслă шкула 1968 çулта пĕтерет. Тăватă çул баян класĕнче А. В. Чернов патĕнче ялан "пиллĕк" паллăсемпе вĕренет. РСФСР тата Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ В. А. Ходяшев пулăшнипе баянпа фортепьяно валли пьесăсем, юрăсем çырать. Çĕнĕ факультетра вĕреннĕ çулсенче Николай Прокопьевич историпе филологи факультетĕнчи пултарулăх коллективне ертсе пырать, фестивальсемпе смотрсенче малти вырăнсене йышăнать.

Çамрăк ăрăва çирĕп пĕлӳ парассине вăл самантлăха манмасть. 1963-1966 çулсенче Кĕтеснер вăтам шкулĕнче вырăс чĕлхипе литература, 1968-1971 çулсенче Вăрмар вăтам шкулĕнче музыка учителĕ, ачасен музыка шкулĕнче баян калама вĕрентекен пулса ĕçлет. 1971-1992 çулсенче вăл Вăрмарти ачасен музыка, 1992-2000 çулсенче искусство шкулĕсен директорĕнче вăй хурать, ачасене баян калама хăнăхтарать. Шкулăн икĕ хутлă çĕнĕ çуртне тума пĕтĕм вăйне парать. Ку тĕлĕнмелле пысăк ĕç пулнă. 2000 çултанпа кунтах директор заместителĕнче вăй хурать... Вăл тăрăшнипе çĕршер çамрăк пурнăç çулĕ çине тухнă.

Николай Прокопьевичăн педагогикăри стажĕ 50 çул. Унăн 30 ытла вĕренекенĕ музыка енĕпе аслă е вăтам пĕлӳ илнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ республикăри конкурссен лауреачĕсемпе дипломанчĕсем пулса тăнă. Кусем – Стас Григорьев, Ирина Данилова, Юрий Сергеев, Эдуард Федоров, Иван Филиппов тата ыт. те.

Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн ăна "РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ", "ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ", "РСФСР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ятсем панă.

Вăл – А. Талвирпа В. Алентей ячĕллĕ литература премийĕсен лауреачĕ. Вун-вун кĕнеке авторĕ. Чăваш Республикин композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ. Шăхальялĕн тата Вăрмар районĕн Хисеплĕ гражданинĕ. Николай Прокопьевич пурнăç урапин кашни çулĕнче нумай хисеплĕ те сумлă ят илнĕ. Вĕсене çырса та пĕтерейĕмĕн.

"Сцена çине тухсан куракансем хапăллани, ырă сăмахсемпе хавхалантарни кун-çул уттинче мăшăр çунат хушать, – çырнăччĕ пĕр çырура ман пата Николай Прокопьевич. – Тата ĕçлес килет, çĕнĕ юрăсем çырма хистет ку. Çĕнĕ юрă итлекенсемшĕн хаклă парне пултăр тесе ĕмĕтленсе пурăнатăп. Вара эпĕ нумай çул хушши чыс-хисепе çухатмăп. Манăн юрă-кĕвĕ вĕçен кайăк пек ӳлĕмрен те вĕçтĕр".

Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ытамĕпе телей тата савăк кăмăл, пултарулăхра сулмаклă утăмсем сана, Николай Прокопьевич. Çапла пултăр!

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

# Сăваплă ĕçе хутшăнар

Шупашкарти Калинин урамĕнче преподобный Сергий Радонежский ячĕпе Пысăк Собор храмĕ çĕкленет. Ку ĕç Чăваш митрополийĕ шучĕпе тата уйрăм çынсемпе предприяти-организацисем укçа-тенкĕ хывнипе пурнăçланать. Çавăнпа та унта пурте хутшăнма пултараççĕ. Укçа-тенке вырăнти тĕн организацийĕн «Вырăс Православи Чиркĕвĕн (Мускав Патриархачĕн) Шупашкар тата Чăваш Епархийĕн» счечĕ çине куçармалла.

Реквизитсем: Религиозная организация «Чебоксарско-Чувашская Епархия Русской Православной Церкви (Московский Патриархат)»

ИНН/КПП 2129018696/213001001
ОГРН 10221 0000 9942
ОАО Банк АВБ г. Тольятти
Р/С 407 038 102 002 000 00174
К/С 301 018 104 0000 0000 700
БИК 043678700
ОКПО 24356598, ОКОГУ 62000, ОКАТО 97401371000
ОКВЭД 91.31, ОКФС 54, ОКОПФ 83, ОКТМО 97701000
Коды, ИФНС – 2130, ПФР – 015-023-001816, ФСС – 2129005154 / 21001 код подразделения/, ФОМС – 974010600045864
428018, ЧР, г. Чебоксары, ул. К.Иванова, д.23
Тел.: (8352) 58-41-40 (бухгалтерия, склад) – buh. chuveparhia@yandex.ru;
Факс: (8352) 58-40-68 (канцелярия) – chuveparhia@cbx.ru
Назначение платежа: «Пожертвование на строительство храма в честь преподобного Сергия Радонежского г. Чебоксары»

# Ырлăх ывăнтармасть

«Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыркăмăллăх марафонĕ республикăра малалла тăсăлать. Пухăннă укçа-тенке йывăр лару-тăрăва лекнĕ ачапăчана пулăшма яраççĕ. Иртнĕ çул фонд пухмачне 9 млн та 502 пин те 150 тенкĕ укçа пуçтарăннă. Юлашки виçĕ çулта вара – 26 млн ытла тенкĕ. Сăваплă çак ĕçе ентешсем кăсăл та хастар хутшăнаççĕ. Предприяти-организацисемсĕр пуçне уйрăм çынсем те. Акă, сăмахран, Тăвай районĕнчи С.В. Николаева марафон счечĕ çине 3600 тенкĕ куçарнă, Шăмăршăри В.А. Дмитриев – 2500, Пăрачкав районĕнчи Н.П. Кирилина – 1700, Елчĕкри Е.В. Антонова – 2600 тенкĕ. Ку списока малалла та тăсма пулать. Çĕр çинче çакнашкал ырă çынсем пурри савăнтарать.

Çак акцие ытларах Комсомольски, Пăрачкав, Шупашкар, Вăрнар, Йĕпреç районĕсем, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисем хастар хутшăнни паллă.

Республикăри тарифсен службин ĕçченĕсем те ырă пуçаруран юлас темен. Вĕсем пухмача 5 пин ытла тенкĕпе пуянлатнă. Сăмах май, асăннă патшалăх службин ĕçченĕсем общество ĕçне хастар хутшăнаççĕ, ыркăмăллăх проекчĕсемпе акцийĕсенчен юлмаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем Пĕтĕм Раççейри «День знаний в Новороссии» акцие хутшăннă.

РФ субъекчĕсенчи Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйсен ассоциацийĕ общество организацийĕсемпе пĕрле кăсалхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак ырă ĕçе йĕркеленĕ. Ăна Донецкпа Луганскри ача-пăча валли шкул хатĕр-хĕтĕрĕ пухас тĕлĕшпе пуçарнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев та ку ĕçе ырласа йышăннă.

Шкул ачисем валли пухнă канцеляри таварĕ, кĕнекесем, портфельсемпе ранецсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне Донецкпа Луганска çитĕç. Асăннă акцие пурте хутшăнма пултараççĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

**РЕКЛАМА**

# Кăтартăва пĕтĕмлетнĕ

Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕ 2015 çулхи пĕрремĕш çур çулхи ĕç кăтартăвне пĕтĕмлетнĕ. Çак тапхăрта филиалăн кредит портфелĕ 11,5 млрд тенкĕ пулнă. Корпоративлă клиентсене 2,2 млрд тенкĕлĕх кредит панă, çав шутра ялхуçалăхне аталантарма йышăннă патшалăх программипе 1,2 млн тенкĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан сезонри уй-хир ĕçне ирттерме кредит парасси 62,8 процент ӳснĕ. Раççей ялхуçалăх банкĕ республикăри АПК-ан шанчăклă финанс партнерĕ пулса тăчĕ, ака-сухана вăхăтра ирттерме укçа-тенкĕпе туллин тивĕçтерчĕ.

Банк регионри пĕчĕк предпринимательлĕхе аталантарма та пулăшать. Çак тĕллевпе 1 млрд тенкĕ уйăрнă.

Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕ уйрăм çынсене кредит парассипе те лайăх ĕçлет. Вĕсен кредит портфелĕ 5,7 млрд тенкĕпе танлашнă. Хальхи вăхăтра банк пулăшăвĕпе республикăри 40 пин çын усă курать.

Филиалăн депозит портфелĕ çулталăк пуçланнăранпа 28,9 процент ӳссе 11 млрд тенке çитнĕ. Çак тапхăрта предприяти-организаци укçине явăçтарасси 24 процент лайăхланнă, кăтарту 3 млрд тенке кармашнă. Уйрăм çынсем те пĕтĕрхинчен 30,8 процент ытларах укçа хывнă, вĕсен тупăшĕ те 8 млрд тенкĕ.

Банкăн Чăваш Енри филиалĕ тӳлев карттипе 61 пин çынна тивĕçтернĕ. 2015 çул пуçланнăранпа республикăри 10,1 пин çын тӳлев карттине уçнă.

– Раççей ялхуçалăх банкĕ кредитпа, депозит продукчĕпе сĕнекен условисем клиент ыйтăвне пахалăхĕпе, шанчăклăхĕпе, процент ставкин виçипе те тивĕçтерет. Филиал лайăх аталанса пыни çакăнпа çыхăннă, – палăртнă банкăн Чăваш Енри филиалĕн директорĕ Ирина Письменская.

*РФ Тĕп Банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

# РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ


### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое кач-во. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3. АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. Доставка по низким ценам. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозем. Дешево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дешево. Д-ка. Т. 89033583021.

**11. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**19. КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

**21. Керамблок, гравмассу.** Т.: 486307, 89176757528.

**22. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.** Ворота, калитки, заборы, навесы. **КОВКА, кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, сайт: metalservis21.ru

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**56. ПЛИТЫ ТРОТУАРНЫЕ, БРУСЧАТКУ.** Т. 8-903-358-77-72.

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

**78. Гравмассу, песок, щебень, керамблоки.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка краном-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95. ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**123. Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 89278502821.

**133. СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; проволоку, **столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**138. ОКНА, ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Гарантия. Т. 89196624097.

**148. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** – низкие цены. Замер и доставка – бесплатно. Т. 89278500856.

**154. ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

**180. Отруби, зерно, к/корм.** Д-ка. Т. 89373916016.

**183.** Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**188. Гравмассу, песок, щебень.** Т. 8-927-846-24-10.

**205. Цемент, песок, гравмассу,** щебень, керамзит. Д-ка. Т. 8-927-849-76-75.

**241. Бетон,** раствор, **ж/б изделия, пиломатериалы.** Д-ка по Чувашии. Т.: 8-927-853-57-32, 8-937-391-86-48.

**251. МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ,** профнастил, металлосайдинг, пластиковые окна. Доставка, замер. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 8-919-653-43-68.

**284. Канашскую гравмассу,** песок, щебень, грунт, навоз. Т. 8-909-302-09-58.

**295. Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**347. Бой кирпича,** песок, **гравмассу.** Т. **89279903070.**

**361. АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

**364.** Немецкие **ОКНА и ДВЕРИ.** Замер, доставка – **бесплатно!** Т. 89278447811.

**365. АКЦИЯ! Гравмассу, песок, щебень.** Т. 89050282225.

**382. Гравмассу, песок** (карьерный, речной), щебень, керамзит, чернозем. Недорого. Т. 89370161122.

**463. Колодезные кольца** (бурение), керамблоки. Т. 89176660432.

**505. ДОМ** (6х9) **с зем. участком** 45 сот. в д. Яргунькино Аликовского р-на (вода, санузел в доме, 2-эт. гараж 18х6, надворные постройки). Цена договорная. Т. 8-960-043-89-17, Слава.

**501. Гравмассу, песок** строительный, **щебень, торф,** глину. Т. 89520269954.

**514. БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **цемент** в ассортименте. Т.: 8-927-668-94-54, 89276672604.

**528. Песок, гравмассу,** щебень, грунт, керамзит, кирпич, бой кирпича,навоз; вывоз мусора. Тел.: 8-919-677-73-53, 89370127122.

**535. Телегу и сани** для лошади – в Вурнарском районе. **Т. 8-961-338-01-10.**

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8.30 до 19 ч., сб., воскр. с 8.30 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 8(8352)552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001 096 МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Богоглобов** решает многие жизненные проблемы.Т. 8-967-474-37-83.

**38. ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**179. Бурение скважин на воду.** Т. 89061312124.

**258. Бурение скважин на воду.** Тел. 8-960-301-25-13.

**259. Бурение скважин на воду.** Тел. 8-927-991-66-99.

**269. Утепление домов – ЭКОВАТОЙ.** Профессиональный монтаж. Доступные цены. Летние скидки. Т. 8-919-669-16-66.

**314. Бурение колодцев.** Продажа колодезн. **колец.** Т.: 89033790901, 370803.

**406. Строительные работы** – от фундамента до кровли. Недорого. Качественно. Т. 8-919-653-43-68.

**481. Услуги мини-экскаватора.** Выезд в районы. Т. 89276682181.

**450. СТРОИТЕЛЬСТВО:** фундамент, кладка, кровля, пристройки. **Отделочные работы** – сайдинг, натяжные потолки, линолеум, штукатурка, вагонка, заборы. Гарантия. **Качество.** Пенсионерам – скидки. Т. 8-927-667-9397.

**518. Ремонт топливной аппаратуры** и **форсунок** для тракторов. Т. 8-927-842-96-85.



**537. Художественная ковка – заборы, ворота,** перила, навесы, козырьки и др. Т. 89276680950.

### ĔÇ / РАБОТА

**54. МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 8-917-673-77-73.

**526. Требуются электромонтажники** в Москву на постоянную работу. З/п от 40000 до 60000 руб. Т. 89165955254.

### КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП

**28. Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**39. Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50. Коров.** Т. 8-927-850-85-64.


## АХ, АНЧАХ...

### Вĕлернĕ те пытаннă

Кăçалхи июнь вĕçĕнче Патăрьел районĕнчи пĕр хуçалăхра ир-ирех 55 çулти арçын виллине асăрханă. Вăл пурнăçран хăй тĕллĕн уйрăлманни тӳрех курăннă: ӳчĕ çинче çапса амантнă йĕрсем пулнă. Право органĕ уголовлă ĕç пуçарса çын вĕлерекене шырама тытăннă.

Ăна июлĕн 8-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнче тытса чарнă. 40 çулти арçын Тутарстанри Пăва районĕнчен иккен. Çын пурнăçне татнă хыççăн тухса тарма хăтланнă, анчах май килмен. Мĕн сиксе тухнă вĕсен хушшинче?

Тĕпчев палăртнă тăрăх, июнĕн 29-мĕшĕнче Патăрьел салинче хунямăшĕ патĕнче хăнара пулнă вăл. 55 çулти кил хуçипе сасартăк хирĕçсе кайнă хайхискер. Сăмах çине сăмах, кĕтмен çĕртен кĕрепле ярса тытнă та хăйĕнчен аслă çынна çапма тытăннă. Лешĕ ӳксен те чарăнман. Урса кайнăскер çĕрте выртакана темиçе хут та çĕçĕпе пырĕнчен чикнĕ, пăвнă. Йывăр аманнă кил хуçи çавăнтах вилнĕ. Преступник ăна картишри туалета пытарнă та хăвăрт тухса шăвăннă. Уй – куçлă, вăрман – хăлхаллă тенĕ. Асăрхакан пулăшнипе йĕксĕке тарса ӳкме паман.

### Бюджет укçине йăкăртнă

Вăрнар районĕнчи пĕр ял библиотекин директорĕ шалăвне хăпартма тĕрлĕ мел шутласа тупнă. Çӳлте ларакансем ирĕк парасса кĕтсе илейменнипе хайхискер хушусем кăларса хăйне хăй «тăрăшса ĕçленĕшĕн» премисемпе хавхалантарнă, укçан пулăшнă. Çапла майпа пуçлăх кĕсйи 53 пин тенкĕлĕх хулăнланнă. Халĕ унăн тивĕçлипе явап тытма тивĕ.

### Вут-çулăм алхасать

Çак кунсенче Çĕмĕрлере виçĕ хутлă çуртри пĕр хваттере вут хыпса илнĕ. Пушара 40 минутран кăна сӳнтерме май килнĕ. Мĕнрен тухнă çулăм?

Малтанлăха палăртнă тăрăх, хваттерте тăваттăн – кил хуçи хĕрарăмĕпе арçын, хĕрĕпе кĕрӳшĕ – пурăннă. Инкеклĕ кун килте ватă арçын пĕччененех пулнă. Ӳсĕрскер пӳлĕмре чĕлĕм мăкăрлантарма пикеннĕ. Кĕçех çывăрса кайнă. Унăн виллине пушар сӳнтерсен кăна асăрханă.

Красноармейски районĕнче те «хĕрлĕ автан» авăтнă. Алманчри пĕр хуçалăхра пушарта сĕтел-пукан, йăла техники пĕтнĕ, стенасем çунса хуралнă. Специалистсем инкек сăлтавне электрооборудованипе усă курнă чухне йĕркене пăхăнманран тухнипе çыхăнтарнă. Икĕ çул каялла хуçисем электропăралука хăйсем тĕллĕн улăштарнă. Çитменнине çĕнетес вырăнне киввипе усă курнă.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 538 пушар тухнă. Унта 55 çын вилнĕ, 67-шĕ йывăр аманнă. Тăкак – 46 млн тенкĕ.

**Л. АЛА.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, июлĕн 20-мĕшĕ**

7.10-7.30 Ирхи кăмăл. (12+) 7.30-8.00, 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 6.30-7.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Ялтан яла. (12+) 11.30-12.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Шурăмпуç. (12+) 16.30-17.00 Ялтан яла. (12+) 17.30-18.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 18.30-19.00 Вăрман кĕвви. (12+) 19.30-20.00 Призвание. (12+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, июлĕн 21-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.00-7.30, 7.30-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.10-6.30, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 18.30-19.00 Туслăх. Дуслык. Дружба. (12+) 19.10-20.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, июлĕн 22-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Туслăх. Дуслык. Дружба. (12+) 11.30-12.00, 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.30-16.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Социальный вопрос. (12+) 19.30-20.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 21.10-22.00 Çиларман-шоу. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, июлĕн 23-мĕшĕ**

6.10-6.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 7.10-8.00, 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16 +) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-19.30 Солдаты и дети Победы. (12+) 19.30-20.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 20.30-21.00 Социальный вопрос. (12+) 21.30-22.00 Пĕр юрă кун-çулĕ. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, июлĕн 24-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Присягая Родине. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30, 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 17.30-18.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, июлĕн 25-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.30-10.00 Преодоление. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Мăшăр çунат. (12+) 16.30-17.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, июлĕн 26-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăм пуç. (12+) 10.30-11.00 Ялтан яла. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Голос Республики. (12+) 16.30-17.00 Преодоление. (12+) 17.10-18.00 Çиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Вăрман кĕвви. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад) (12+) 20.05-23.30 Каçхи микс. (12+) 23.30-24.00 Наша Республика. Главная тема. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

